чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

123 /26529/ № Эрне кун, 2014, çĕртме (июнь), 27 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Уяв ячĕпе!

***Хаклă туссем!***

***Сире Çамрăксен кунĕ – çамрăклăх, çутă ĕмĕтсен, иксĕлми вăй-хăват, хăюллă сăнавсен, ĕмĕт вĕçевĕн тата пурнăçри çул шыравĕн уявĕ – ячĕпе чĕререн саламлатăп.***

Чăваш Республикин патшалăх политики çамрăксем хăйсен пултарулăхĕпе усă курмалли условисем йĕркелес, çамрăк ăрăвăн талантлă та пуçаруллă представителĕсене пулăшас тĕллевлĕ.

Наука, техника, производство, журналистика, литература, культура, искусство, вĕренӳ, воспитани, çамрăксен политикин, сывлăх сыхлавĕн, çут çанталăка сыхлассин тата спорт сферисенчи çамрăксене пулăшма Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕсене параççĕ. Юлашки икĕ çулта вĕсен шучĕ тăваттăран саккăр таран ӳсрĕ, лауреатсене паракан тӳлев пилĕк хут пысăкланчĕ – кашни енпе 50 пин тенкĕпе танлашать.

Çуллен вĕренӳре, бизнес-проект тăвассинче, наука, пултарулăх, производство, управлени ĕç-хĕлĕнчи курăмлă кăтартусемпе палăрнă пиншер яшпа хĕр пултарулăхри пысăк ăнтăлушăн стипендие тивĕçет. 2004-2014 çулсенче пĕтĕмпе çавнашкал 11 пин стипенди панă.

Чăваш Ен хăйĕн маттур та пуçаруллă, ĕçчен çамрăкĕсемпе тивĕçлипех мăнаçланать. Нумай çамрăк тĕрлĕ ĕç-хĕл сферинче чăн-чăн профессионал пулса тăма ĕлкĕрчĕ. Вĕсем питĕ лайăх девиз шухăшласа кăларнă, эпĕ ăна туллин ырлатăп: «Ăçта эпир – унта çĕнтерӳ!»

Çамрăксене хăйсене шанма, пуçаруллă пулма, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, ырă мĕн пур пуçарура çитĕнӳ, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

# Лайăх вĕреннĕ хыççăн лайăх канмалла

***Çапла тумашкăн Канаш районĕнче пĕтĕм услови пур. Çакна ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев унта ĕçлĕ çул çӳревре пулнă май хăйĕн куçĕпе курса ĕненчĕ. Вăл районта ачасен çуллахи каникул тапхăрĕнчи канăвне йĕркелекен учреждениесен ĕçĕпе паллашрĕ.***



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Михаил Васильевич Шăхасанти ачасен А.Г.Николаев ячĕллĕ «Космонавт» сывлăх лагерĕнче пулчĕ. Кунта пĕр сменăра 300 ача канма пултарать. Лагерь территорийĕнчех – библиотека, çуллахи клуб, волейбол, теннис, футбол тата баскетбол площадкисем, бассейн, тир, кружоксен занятийĕсене йĕркелемелли беседкăсем... «Космонавтра» Канаш хулипе районĕн ачисем сывлăхне çирĕплетеççĕ, ытти муниципалитетран та ачасем килеççĕ. 2014 çулта лагерь администрацийĕ Канашри педагогика колледжĕпе ятарлă килĕшӳ тунă, çавна май кунта асăннă вĕренӳ учрежденийĕн студенчĕсем вожатăй пулса ĕçлеççĕ – вĕсемшĕн питĕ лайăх практика.

Унтан вăл Канашри ачасемпе çамрăксен социаллă приютĕнче пулчĕ. Çак учрежденин тĕп тĕллевĕ – пурнăçра йывăр лару-тăрăва лекнĕ çул çитмен çамрăксене васкавлă социаллă пулăшу кӳресси, вĕсем килсĕр-çуртсăр çапкаланса çӳресрен, правăна пăсасран сыхланасси. Приют талăкĕпех ĕçлет, кунта пĕр харăс 30 ача – 15 хĕр ача тата 15 арçын ача – пурăнма пултарать.

Учреждение Канаш хула администрацийĕн 1994 çулхи йышăнăвĕпе туса хунă. Паянхи кун тĕлне кунта 1,5 пине яхăн ачана, çамрăка пулăшнă, 1,7 пин ытла çамрăка реабилитациленĕ. Кăçал каникул вăхăтĕнче приютра 240 ача канĕ, çак тĕллевпе 380 пин тенке яхăн уйăрнă.

Михаил Игнатьев çул çитменнисене йышăнакан, çемьене тата ачасене социаллă пулăшу кӳрекен уйрăмсемпе, диагностика тата социаллă реабилитаци уйрăмĕсемпе паллашрĕ. Михаил Васильевич палăртнă тăрăх – приют вырнаçнă çурт кивĕ, юхăннă, педагогсене методика пулăшăвĕ кирлĕ, çавна май учреждени малалла мĕнле ĕçлессине татса памалла, вăл ку енĕпе Сывлăх сыхлавĕн тата Вĕренӳ министерствисене тивĕçлĕ хушусем пачĕ.

Тĕплĕнрех – çитес номерте.

■ **И.ИВАНОВА**

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*

## Чăваш Республикин 2013 çулхи çамрăксен патшалăх премийĕсене парасси çинчен

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премийĕсем енĕпе ĕçлекен комисси сĕнĕвĕсене пăхса тухса **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин 2013 çулхи çамрăксен патшалăх премийĕсене тата «Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ» ят парас:

**ăслăлăх, техника тата производство енĕпе**

**Александр Владимирович Антонова,** сыпăнтарнă самосвалăн куçăмлă тытăмĕсен тата рамăсен пайĕн рамăсен конструкцийĕ енĕпе ĕçлекен тĕп специалистне, **Василий Геннадьевич Капитонова,** «Пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ техника туса хатĕрлес енĕпе ĕçлекен инжиниринг компанийĕ» тулли мар яваплă обществăн трансмисси пайĕн бюровĕн пуçлăхне, С-33 сыпăнтарнă самосвалăн трансмисси установкине, рамине тата кузовне туса хатĕрленĕшĕн;

**Сергей Владимирович Карпова,** «И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ» аслă професси пĕлĕвĕ паракан федераци патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн органика тата фармацевтика химийĕн кафедрин аслă преподавательне, «Липосомаци натрин 2-ацил/ароил/-1,1,1,3-тетрациан-пропеничĕсен производнăйĕсене тĕпе хурса хатĕрленĕ клиника умĕн туберкулеза хирĕç активлă кĕрешекен хутăшсен биологилле ирĕлеслĕхне пысăклатни евĕрлĕ меслет» темăпа çырнă ĕçсен ярăмĕшĕн;

**вĕрентӳ, воспитани тата çамрăксен политики енĕпе**

**Анна Германовна Головинăна, Марина Вениаминовна Петровăна,** «Хĕрарăмсем наукăра тата вĕрентӳре» Регионсен хушшинчи общество организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн членĕсене, «Математика тытăçăвĕсем» ăс-хакăл ăмăртăвĕ» проекта пурнăçланăшăн;

**журналистика енĕпе**

**Артем Михайлович Чубукова,** «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн çамрăк гвардийĕ» Пĕтĕм Раççейри общество организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн ертӳçин çумне, Чăваш Республикинче «Информаци юхăмĕ» проекта пурнăçланăшăн;

**сывлăх сыхлавĕ енĕпе**

**Ольга Витальевна Алексеевăна, Анастасия Владимировна Викторовăна, Порфирий Николаевич Петрова, Николай Юрьевич Свинцова,** «Чăваш Республикинчи стоматологсен ассоциацийĕ» общество организацийĕ çумĕнчи Раççейри стоматологи ассоциацин «Студент стоматологсем тата çамрăк врачсем» секцийĕн активисчĕсене, «Сывă шăлсем – сывă ачасем – сывă çемье» çамрăксен волонтер юхăмĕ» социаллă пĕлтерĕшлĕ проекта пурнăçлас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн;

**тавралăха сыхлас ĕç енĕпе**

**Станислав Олегович Трофимова**, «ЭКА» Регионсем хушшинчи экологи общество организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн ертӳçин çумне, çамрăксен «Кислород ытларах пултăр» экологи проектне пурнăçланăшăн;

**физкультура тата спорт енĕпе**

**Алексей Владимирович Германова,** Чăваш Республикинчи Шупашкар хулинчи «Мускаври патшалăх машинăсем тăвакан университечĕ /МАМИ/» професси енĕпе аслă пĕлӳ паракан федераци патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн Шупашкарти политехника институчĕн /филиалĕн/ студентне, спорт аэробики енĕпе тунă спортри пысăк çитĕнӳсемшĕн;

**хăй ирĕкĕпе тăвакан ĕç-хĕл енĕпе**

**Ксения Юрьевна Александровăна,** «Мускаври автомобильпе çул-йĕр патшалăх техника университечĕ /МАДИ/» професси енĕпе аслă пĕлӳ паракан федераци патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн Атăлçи филиалĕн студенткине, **Александра Сергеевна Волченковăна,** «И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ» аслă професси пĕлĕвĕ паракан федераци патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн студенткине, **Юлия Витальевна Егоровăна,** «И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ» аслă професси пĕлĕвĕ паракан федераци патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн студенткине, **Эльдар Хасанович Черкесова,** Шупашкар хула администрацийĕн массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăну тытакан тата çамрăксен политикин управленийĕн çамрăксен тата общество аталанăвĕн пайĕн пуçлăхне, «Волонтерсен шкулĕ» çамрăксен вĕренӳ проектне пурнăçланăшăн.

2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çĕртме, 25, 94 №.



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ВАÇКĂ ИТЛЕТ, АНЧАХ ÇАВ-ÇАВАХ ÇИЕТ

**Центрти телекуравăн хыпарсен кăларăмĕсем юлашки уйăхсенче çак темăна куллен çĕклеççĕ. Сăмах – пăлхавлă Украинăн Раççей умĕнчи çут çанталăк газĕшĕн тӳлемелли калама çук пысăк парăмĕ пирки. Чăннипех ăнланма-йышăнма йывăр лару-тăру: Раççей парăма татмалла тесе апла та ӳкĕтлет, капла та хистет – çук, украинсем хăнк! та тумаççĕ, сенкер топливăна вара çĕртме уйăхĕн 16-мĕшĕччченех намăса пĕлмесĕр уçларĕç.**

**Юрĕ, хăйне тăрантаракан кăкăра çыртакан пархатарсăр ачана çаврăннă, хăйне ырă тăвакана паллами-хисеплеми пулнă Украина инçе тейĕпĕр... Калаçу хамăр патри ĕçпуç тавра. Анчах хăлăхсăр Киев пирки ăнсăртран сăмах тапратмарăм, илтмĕше перекен хохолсене аса илтерекеннисем кунта та пур – акă мĕн пирки каласшăн.**

**Кирек хăш сферăна ил – пур çĕрте те парăм. Уйăх пуçламăшĕнче Республикăн консолидациленĕ бюджечĕн тупăшĕсене ӳстерес ыйтусемпе ĕçлекен ведомствăсен хушшинчи комиссийĕнче асăннă цифрăсенех илер. Патшалăх тата муниципалитет харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсемпе, пурлăхпа усă курнăшăн тӳлемелли парăм 765 млн тенкĕ капланнă. Çак укçа пĕр çул кăна пухăнман вĕт. Ахальтен мар ĕнтĕ ларура ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Савва» тытăмне кĕнĕ Атăлçи пир-авăр компанийĕн пăтăрмахлă историне аса илтерчĕ: «Унăн Шупашкар хули умĕнчи парăмĕ кăна 186 млн тенке яхăн. Çав вăхăтрах пĕтĕмпех саккунлă: предприятие панкрута кăларнă, активсене айккине илсе тухнă, парăмсене вара бюджет, предприяти ĕçченĕсем çине çакса хăварнă».**

**«Савва» пирки нумай калаçнă – çăвар тутине сая яни çеç. Унсăр пуçне те пуçа ыраттараканни пайтах. Усă курнă энергоресурссемшĕн тӳлесси – акă ăçта парăмсен вĕççĕр-хĕрсĕр тĕнчи. Республика Строймине пĕтĕмлетнĕ тăрăх – кăçалхи çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне ЖКХ организацийĕсен çут çанталăк газĕшĕн, электричествăшăн тата ăшă энергийĕшĕн тӳлемелли парăмĕ 3,1 млрд тенкĕрен те иртнĕ – Чăваш Ен бюджечĕн тупăш пайĕн 10% шайлашуллă вĕт! Çав шутра 428 млн тенки – усă курнă газ тӳпи, 497 млн – электроэнергишĕн. Тĕп пайĕ, 2,2 млрд тенкĕ ытларах, ăшăшăн тӳлемен укçа.**

**Юлашки цифра ытла та пысăкки пушшех тĕлĕнтерет. Тĕп хулана тата Çĕнĕ Шупашкара ăшăпа тивĕçтерекен энергокомпани ертӳçисем çирĕплетнĕ тăрăх – çынсем ăшăшăн йĕркеллех тӳлеççĕ, анчах çав укçа ресурспа тивĕçтерекен компание çитмест. Хăйĕн Шупашкарти ăшă электростанцийĕн гигакалорийĕсене вăл пурăнмалли çуртсене тӳрремĕнех мар, «посредник» вырăнĕнчи тепĕр компани урлă парать – шăпах вăл çур млрд ытла тенкĕлĕх парăма кĕрсе кайнă. «Парăма татăр», – тархаслать энергокомпани, лешĕ вара ăна хăйне УКсемпе ТСЖсем вăхăтра тӳлеменни çине йăвантарать, тӳлеме васкамасть. Энергетиксем те тарăхаççĕ, Правительство шайĕнче те çинеçинех сивĕ сăмах тивет, Ваçкă вара итлет, анчах çав-çавах çиет. Çав «посредник» тӳрĕ кăмăллăхĕ пирки иккĕленме сăлтав паракан тепĕр самант та пур: вăрăмах мар историллĕ предприяти ертӳçисене унăн республика тулашĕнчи хуçисем перчетке пек улăштараççĕ – эпĕ ас тăвасса, ултăмĕш пуçлăх. Пĕри çулталăк ĕçлет те – тепри килет. Пĕлтĕр кăна ют регионтан çĕнĕ директор килнĕччĕ, çемçе пуканне те ăшăтса ĕлкĕрейменччĕ пуль, халь каллех – çĕнни. Вăл та ютран. Кун пек чух çĕнни «киввишĕн» яваплă пуласса кĕтни вырăнсăр, хăй кунта вăрах пуласси иккĕленӳллине кура – пушшех.**

**Парăмсен ыйтăвĕ, шел, çакнашкал «улăпсен» миллиардсемшĕн пыракан кĕрешĕвĕ-хирĕçĕвĕпе кăна иксĕлмест – унăн уйрăм çынсене тӳрремĕнех пырса тивекен юппи те пур. Чăваш Енре ĕç укçи пĕчĕк тесе миçе çул ӳпкелешетпĕр те – влаççем ăна пысăклатас енĕпе мерăсем йышăнма тытăнни куç кĕрет. Чăн та, тăкăнса тăман бюджета кура пĕтĕмпех ăнăçлă пулса пырать тееймĕн – халăх пуспа çырлахасшăн мар, тенкĕ шыраса Мускава, çăкăрлăрах ытти регионa ăнтăлать.**

**Çийĕнчен влаççен умĕнче лайăх пек курăнма кăна тăрăшакан пуçлăхсем те пайтах. ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви те йышăнать: чылай предприятире шалу ӳсĕмне ĕçлекенсен шутне чакарса тивĕçтереççĕ. 20% укçа хушрĕç тейĕпĕр, анчах икĕ çыншăн тар тăкмалла – лайăх вĕт. Тепĕр тесен нумайăшĕшĕн «çӳлтен» хистени – пуш сăмах кăна. Унсăрăн ĕç паракан 942 тытăм тӳлевĕн вăрттăн схемисем çине куçнине, официаллă майпа шутласа паракан шалăва МРОТран та пĕчĕкрех палăртнине тупса палăртнине епле ăнлантарăн?**

**Ĕç укçипе çыхăннă парăм республикăра чакнă-ха. Çулталăк каялла вăл виçĕ теçетке млн тенкĕ патнеллехчĕ, кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2,1 млн тенкĕ юлнă. Те тӳлесех пĕтерчĕç, те панкрута тухнă предприятисен парăмĕсене каçарчĕç – калаймастăп, çапах парăм тени ĕçлев сферинчи лару-тăрушăн питех те сиенли каламасăрах паллă. Мĕн пытармалли, чылай предприятире ĕçлекенсене тӳлем пек тусах ĕçлеттерме тăрăшни вăрттăнлăх мар. Мăкăртатса пăх-ха – пĕр хурав: «Пăрахса кайăр, тытса тăмастпăр!» Ĕçлекен çынна йĕркеллĕ тӳлеймеççĕ тĕк, эппин, çав пуçлăхсем хăйсем пултараймаççĕ – япăх менеджерсем, апла тăк чи малтанах хăйсен яваплă должноçран пăрахса каймалла. Çук, каймаççĕ – Ваçкăсем çав-çавах çиеççĕ...**

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Çурла уйăхĕччченех вĕçĕç

***Тăхăр вырăнлă "Cessna Caravan" самолетсем кăçалхи кăрлачăн 31-мĕшĕнчен пуçласа пассажирсене Ĕпхӳ-Шупашкар-Ĕпхӳ тата Самар-Шупашкар-Самар маршрутсемпе турттараççĕ. Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне 1165 çынна вырăна çитернĕ ĕнтĕ. Самартан Шупашкара 250-ăн килнĕ, тĕп хуларан Самара 245-ĕн кайнă.***

Шупашкар-Ĕпхӳ тата Ĕпхӳ-Шупашкар маршрутпа çул çӳрекен ытларах. Чăваш Енрен Ĕпхĕве – 342-ĕн, унтан республикăна 328-ăн çитнĕ. Самолетсем çу уйăхĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа рейса ытлари кун, кĕçнерни кун, шăмат кун тухаççĕ. Пассажирсене илсе çӳресси пирки авиапредприятипе çирĕплетнĕ килĕшĕве утă уйăхĕн 31-мĕшĕччен тăснă.

Çак рейспа вĕçекенсем патшалăх çăмăллăхĕпе усă кураççĕ. Аэропорт вĕсене билет самай йӳнĕрех хакпа сутать.

**И.АНИСИМОВА.**

### Вуннăмĕш хут йышăнчĕ

***Çак кунсенче ачасен республика шайĕнчи "Лесная сказка" санаторийĕнче Раççей субъекчĕсенчи чăваш диаспорин шкул ачисен çуллахи кану смени уçăлнă. Кăçал унта çĕр-шывăн вунă регионĕнчен 45 ача килсе çитнĕ.***

Сменăна уçма Чăваш Республикин культура министрĕ Вадим Ефимов хутшăннă. Вадим Петрович çитĕнекен ăрăва Чăваш Ен Правительстви ячĕпе саламланă. "Эткер" этнокультура лагерьне чăваш тĕнчин пуласлăхĕ, тăван халăхăн ырă та пархатарлă йăли-йĕркине, культурине малашлăхра тытса пыракансем, пуçтарăннине палăртнă. Министр кашни ачана чăваш халăхĕн паллă поэчĕн Константин Ивановăн вилĕмсĕр "Нарспи" поэмине парнеленĕ.

Республика тулашĕнчи йăхташсен ачисене çавăн пекех ЧР Вĕренӳ министерствин, Чăваш наци конгресĕн представителĕсем саламланă.

Палăртса хăварар: "Эткер" этнокультура лагерĕ тулайра пысăк йышпа пурăнакан чăваш ачисене пуçласа 2005 çулта йышăннă. Çавăнтанпа Беларуçри, Тюменьри, Пушкăртстанри, Чĕмпĕрти, Сарă тури, Мускаври тата ытти хутлăхри çĕрçĕр хĕр ачапа арçын ача тăван культурăпа, историпе, йăлайĕркепе çывăхланма пултарчĕ.

**Н.СМИРНОВА.**

### Каçал енре – элемсен куравĕ

***Мĕн пытармалли: тепĕр чухне эпир кашни элемĕн – гербăн, ялавăн – пĕлтерĕшне, тен, ăнлансах та пĕтерейместпĕр.***

Каçал енсемшĕн текех пăшăрханма кирлĕ мар – Республика кунĕ умĕн райцентрти «Çĕр тата çынсем» халăх музейĕнче виçĕ – Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри тата Красноармейски – районпа вĕсенчи ял тăрăхĕсен гербĕсемпе ялавĕсен куравĕ уçăлнă. Ăна республикăри ăста геральдист, нумай элем авторĕ Вадим Шипунов йĕркеленĕ. Хальхинче вăл 36 ĕçпе паллашма сĕнет. Вадим Анатольевич музее мăшăрĕн, Галина Николаевнăн «Флаги и гербы современной Чувашии» паха кĕнекине парнеленĕ.

Куравра Красноармейски районĕнчи тавра пĕлӳпе истори тата культура музейĕн, Э.Юрьев ячĕллĕ фонд директорĕ В.Серафимов мухтавлă ентешĕн, республика элемĕсен авторĕн Элли Михайловичăн сумлă ĕç-хĕлĕпе паллаштарнă. РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ художникĕсем М.Григорьянпа В.Лукиянов тата курав авторĕ В.Шипунов элемсемпе кăсăкланакансене вĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен каласа кăтартнă.

**Ю.СТЕПНОВ.**

### "Гвардеец" лагерьтен таврăннă

***Çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чул хула облаçĕнче оборонăпа спорт тата сывлăха çирĕплетмелли "Гвардеец" лагерьте 1-мĕш смена хупăннă. Çав каçах Чăваш Енри ачасемпе çул çитмен çамрăксем те тăван тăрăха таврăннă.***

Пирĕн 20 ентеш Атăлçи регионĕнчи тата Крым Республикинчи ытти вĕренекенпе пĕрле 18 кун çар условийĕсемпе паллашнă: стройпа утма хăнăхнă, çапăçăва ертсе пырассин тактикипе стратегийĕн вăрттăнлăхĕсене "шĕкĕлченĕ". Чăваш ачисемшĕн 1-мĕш смена ăнăçлă иртнĕ. Чăваш Ен команди тĕл перес енĕпе чи лайăххисен йышне кĕнĕ. Çавăн пекех ишес енĕпе йĕркеленĕ ăмăртусенче малтанхи икĕ, "Чи лайăх командир", "Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен уставĕсем" конкурссенче 3-мĕш вырăнсене йышăннă. Лагере Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич килни пурне те савăнтарнă. Вăл кашни "гвардееца" алла çыхмалли сехет – асăнмалăх гравировкăпа – парнеленĕ.

"Гвардеец" лагерĕн 2-мĕш смени çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа утă уйăхĕн 16-мĕшĕччен ĕçлĕ. Унта Чăваш Енрен 20 ача – Шупашкарти 14-мĕш кадет шкулĕнче класĕнче вĕренекенсем тата Вăрнар, Патăрьел, Пăрачкав, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Шупашкар районĕсенчи çул çитменнисем – кайĕç.

**И.НИКОЛАЕВА.**





Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, çĕрле 12 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 46 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 37 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, çумăр çăвать. Çил кăнтăртан çеккунтра 7 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, çĕрле 7 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 739 мм, сывлăшри нӳрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 36 минут.**

# Полицире ĕçлеме çăмăл мар

***Çапла çирĕплетет Куславкка районĕнчи шалти ĕçсен пайĕнче 30 çула яхăн тăрăшнă Людмила Летяева. Кăçал сумлă юбилейне паллă тунă ветеран ача чухнех милиционер пулма ĕмĕтленнĕ-ши?***

«1974 çулта çемьепе Алтай тăрăхĕнчен Куславккана куçса килсен районти шалти ĕçсен пайне бухгалтер-секретарь кирлине пĕлтĕм. Тӳрех унта çул тытрăм, – калаçăва пуçларĕ Людмила Михайловна, – Малтан çак должноçра нумай çул ĕçлерĕм, каярах инспектора куçарчĕç». 30 çул хушшинче пур тытăмра та ĕçлеме тӳр килнĕ унăн: ача-пăча пӳлĕмĕнче /халĕ – çул çитменнисемпе ĕçлекен пай/, ĕçкĕçсен çуртĕнче, участковăйсен уйрăмĕнче, штабра, дознанире, финанс пайĕнче, юлашки çулсенче – пуçлăх çумĕ.

«Милицире ĕçлеме нихăçан та çăмăл пулман. Граждансемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле, кашни çынна шанмалла. Çав вăхăтрах çынлăх туйăмне упраса хăвармалла – çак енсем питĕ пĕлтерĕшлĕ. Службăра тăнă чухне те мана питĕ хисеплетчĕç, халĕ те пурте сывлăх сунаççĕ: ӳсĕрскер-и вăл, судпа айăпланни-и... Мĕн кăна курмарăм пулĕ çак тапхăрта. Пĕррехинче путсĕр арçынна чарма кайрăмăр, аллинче пуртă пулин те хам малтан кĕрсе кайрăм. «Хĕрарăма тивмест», – вĕçрĕ пуçра шухăш. Кайран хама ӳпкелетĕп: пуртăпа çапнă пулсан... Юрать, инкек-синкексĕр иртрĕ. Ачасемпе ĕçлеме вара тата йывăртарах. Вĕсене тĕрĕс çул çине тăратмаллаçке. Учетра тăракан кашни шăпăрлан патне çитеттĕм, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе калаçаттăм. Халĕ хăшĕ-пĕрне куратăп та савăнатăп: çемьеллĕ, мухтав турра!» – хаш сывлать ветеран.

Чăваш Енрен çĕр-çĕр çухрăмри Алтая еплерех лекнĕ-ха Куславкка хĕрĕ? «Мана, Шупашкарти план-экономика техникумĕнче бухгалтер дипломне алла илнĕскере, Алтай крайĕнчи Сургут хулине ĕçлеме ячĕç. Тыр-пул базине вырнаçтарчĕç. Унтах пулас мăшăрăмпа Владимирпа паллашрăм, вăл механикчĕ. Пĕрле пултарулăх çуртне юрлама-ташлама çӳреттĕмĕр, каярах çемье çавăртăмăр. Çулталăкран мана анне каялла таврăнма ыйтрĕ», – иртнине хаваспах аса илчĕ хĕрарăм.

Паянхи полицейскисене /чăннипе, çĕнĕ çак сăмаха халĕ те хăнăхаймасть Людмила Михайловна/ çăмăл маррине те палăртрĕ вăл: «Ĕлĕк пире питĕ хисеплетчĕç. Халĕ... Ун чухне çынсем те ырă кăмăллăччĕ, ĕçтешĕмсем те тăрăшуллăччĕ. Милици пуçлăхне Николай Федорова ялан ăшшăн аса илетĕп. Вăл мана чылай пулăшрĕ. Пирĕн коллектив питĕ туслăччĕ, уявра-и, ĕçре-и – яланах пĕрлеччĕ. Милиционерсем юрлама-ташлама питĕ ăстаччĕ. Эпир, пултарулăх ушкăнне çӳрекенсем, халăха концертпа савăнтараттăмăр, пире питĕ кăмăллăн йышăнатчĕç. Вырма вăхăтĕнче колхозниксем патне çитсе килеттĕмĕр. Хамăр та хĕрӳ ĕççире алă усса ларман».

Хальхи вăхăтра милици майорĕ – Куславккари полици пайĕн ветеранĕсен канашĕн председателĕ. Вăл пĕлтерне тăрăх – районта 90 çын, вĕсенчен 30-шĕ канаш членĕ. «Канаш пурри ветерансемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ватă çынсене йывăр лару-тăрура пулăшатпăр, тĕл пулусем йĕркелетпĕр, тĕрлĕ мероприяти ирттеретпĕр, юбилейсемпе саламлатпăр», – терĕ Людмила Михайловна.

Летяевсем икĕ хĕр çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Иккĕшĕ те амăшĕн çулĕпе кайнă, бухгалтер дипломне илнĕ. Пĕри Шупашкарта пурăнать, тепри Сургутра тĕпленнĕ. Паян кукашшĕпе кукамăшне мăнукĕсем куç тулли телей парнелеççĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан Людмила Летяева пĕр тапхăр çурçĕрте пурăннă, унта пĕр предприятире тĕп бухгалтерта, автозаправка тытăмĕн директорĕнче ĕçленĕ. Паян та вĕсем ахаль лармаççĕ: теплицăра çуркуннерен пуçласа хĕл ларичченех пахча çимĕç çитĕнтереççĕ, чун парса ӳстернĕ шултра помидорĕсемпе тăванĕсемпе юлташĕсене хаваспах хăналаççĕ. Хĕрарăмăн ал ĕç тумалли сахал мар, чи юратни вара – нуски-алсиш çыхасси. Арçыннăн – юсавпа строительство ĕçĕ: Летяевсем те хăйсен çуртне анлăлатма ĕмĕтленсе пурăнаççĕ.



● *Сĕнтĕрвăрринчи полици пайĕн пуçлăхĕ Г.Григорьев тата унăн пулăшуçи С.Архипов юбиляра саламлаççĕ.*

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Пурнăçран*

# Юрату вилĕмсĕр



Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн мана Вăрнар районĕнчи пĕр шкула аслă пионервожатăй пулса ĕçлеме ячĕç. Шкулĕ тăван ялтан пилĕк çухрăмра кăна. Çавăнпа питĕ савăнтăм: хваттер кирлĕ мар, апат-çимĕçĕ те килтех. Кашни кунах вунă çухрăм утасси тем мар. Сахал-и çуллахи каникулта кунĕпе тырă вырнă, утă çулнă, çум çумланă.

Шкулта мана питĕ кăмăллă кĕтсе илчĕç. Уйрăмах директор савăнчĕ: «Эпир кунта ватă учительсем кăна тăрса юлтăмăр-ха. Ачасем вара çамрăк вĕрентекенсене юратаççĕ. Вожатăйăн ĕç укçи сахалрах ĕнтĕ. Эпир хушса парăпăр, хăвăрăн кăмăл пулсан. Сире юрă урокĕсемпе рисовани урокĕсене ирттерме вĕрентнĕ вĕт? Çав сехетсем сирĕн пулĕç».

Ку сăмахсене илтсен эпĕ пĕр хĕпĕртерĕм, пĕр тĕлĕнтĕм: мĕнле шанса пачĕç-ха мана аслă классенчи уроксене? Пысăк хавхаланупа ĕçе тытăнтăм. Директор çумĕ мана пулăшсах тăчĕ. Кĕçех районта пионервожатăйсен семинарĕсене ирттерме пуçларĕç. Унта пире мĕн кирлине пурне те вĕрентетчĕç: ĕç планĕ хатĕрлеме, пионер сборĕ ирттерме... Çĕнĕ ташăсемпе юрăсене те. Ачасемпе ĕçлеме мана килĕшетчĕ. Пионерсемпе сборсем, концертсем, кану каçĕ, тĕл пулу йĕркелесех тăраттăм. Ачасем эпĕ сĕннине хаваспах пурнăçлатчĕç. Кирлĕ чухне хам ĕçе комсомолецсене те явăçтараттăм. Уйрăмах вуннăмĕш класс ачисем тăрăшатчĕç. Вĕсем мана хăйсен тантăшĕ вырăннех хуратчĕç. Анчах эпĕ вĕсене кирлĕ таран кăна хам пата çывхартаттăм. Çавăнпа вĕсем манран кăштах хăратчĕç те, вăтанатчĕç те. Инкеке пула, икĕ арçын ача, Витя Савченкăпа Петя Иванов, хама юратса пăрахнине туйрăм. Вĕсем манран виçĕ-тăвата çул кĕçĕнрехчĕ. Иккĕшĕ те питĕ лайăх каччă. Енчен те вĕсем хампа тантăш пулнă пулсан хăшне те пулин тус тăваттăм пулĕ. Тĕрĕссипе, мана ытларах Савченко килĕшетчĕ. Лайăх вĕренет, ырă кăмăллă, çаврăнăçуллă, тирпейлĕ, нумай вулать, ĕçлеме ӳркенмест. Уçă та таса чунлă. Юлташĕсемпе хутшăнма пĕлет. Ачаранах лайăх воспитани илни курăнать. Вăл чăваш ялне пĕчĕк чухнех, вăрçă вăхăтĕнче, амăшĕпе пĕрле Украинăран эвакуаципе куçса килнĕ. Ашшĕ çар летчикĕ пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче самолечĕпе пĕрлех çунса кайнă. Витьăн пĕтĕм ĕмĕчĕ – ашшĕ пек летчик пуласси.

Витьăн амăшĕ упăшки вилнĕ хыççăн ял каччипе пĕрлешнĕ те кунтах пурăнма юлнă. Иккĕмĕш упăшкинчен йĕкĕреш хĕрпе пĕр ывăл çуратнă. Паллах, унăн Витя çинчен шухăшлама вăхăт пулман, çапах ывăлĕ хăш-пĕр ача пек япăхса каймарĕ. Тарăн шухăшлă та илемлĕ сăнпитлĕ каччă пулса ӳсрĕ. Нимĕнле хĕр те тиркемĕ ăна.

Эпĕ ăна хама юратнишĕн хĕрхенеттĕм. Мĕншĕн тесен çак юратăвăн пуласлăхĕ çук. Эпĕ унран аслă. Хăйшĕн асаплану кăна. «Манăн вара унăн çулĕ çинчен пăрăнмалла, ун туйăмне урăх еннелле пăрса яма тăрăшмалла», – шухăшлаттăм. Çавăнпа та унпа май килнĕ таран сахалрах тĕл пулма тăрăшаттăм, сисмĕш тăваттăм.

Çуркунне çитсен Витя мана хитре чечексем парнелеме пуçларĕ. Хăй мар, йăмăкĕсем паратчĕç вĕсене. Киле вĕсен тĕлĕнчен иртсе çӳремеллеччĕ. Кашни кунах йăмăкĕсем алăк умĕнче кĕтсе тăратчĕç. Чечекĕсене Витя вăрмантан татса килнине тавçăраттăм. Вăрманĕ ял çумĕнчех.

Пĕррехинче чечексене илмерĕм: «Хитре чечексене кашни кунах татма юрамасть, вĕсене упрас пулать», – терĕм. Хĕр пĕрчисем кӳренчĕç, макăрса ячĕç, чечек çыххине ман ума хучĕç те чупса тарчĕç. Çĕклерĕм вĕсене, анчах кун хыççăн тепĕр урампа çӳреме пуçларăм. Витьăн кăмăлĕ улшăнчĕ: те çилленчĕ, те вăтанчĕ. Пăрăнса çӳреме пуçларĕ.

Кĕçех вуннăмĕш классен экзаменсем пуçланчĕç. Эпĕ хам та института çуллахи сессине кайрăм /куçăмсăр майпа вĕренеттĕм/. Вуннăмĕшсем уйрăлу каçне чĕнсе янăччĕ, килме вăхăт пулмарĕ. Çапла вара Витьăпа Петьăна шкултан тухса кайиччен урăх тĕл пулмарăм. Кайран тин учительсенчен Петя пединститута, Витя авиашкула вĕренме кĕнине илтрĕм. Каччăсем çыру çырасса шаннăччĕ-ха, анчах çырмарĕç. Ыттисенчен килетчĕç вĕсем, Петьăпа Витьăран вара – çук.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçăнса хĕл те иртсе кайрĕ. Тепĕр çуркунне çитрĕ. Пĕррехинче тĕлĕк куртăм: янкăр таса тӳпе, тавраллах хĕвел ялтăрать, анчах шăтса тухнă симĕс черчен курăк хăйĕн патне туртать. Эпĕ питĕ хаваслă, манăн вĕçес килет. Алăсене çунат евĕр çĕклерĕм çеç – Витя Савченкона курах кайрăм. Летчиксен çуллахи уяв тумĕпе. Сылтăм аллине бинтпа çавăрса çыхни палăрать. Акă вăл ман ума çитсе тăчĕ, сывлăх сунчĕ.

– Салам, Регина Петровна. Эпĕ кăштах амантăм, çавăнпа та мана пĕр кунлăх киле ячĕç. Ыран каятăп. Яланлăхах...

Вăл тата тем каласшăнччĕ. Анчах та çак вăхăтра шарт вăранса кайрăм. Ку тĕлĕк пулнине ĕненмесĕр выртатăп. Чăн-чăн пулнă пекех туйăнчĕ-çке. Хама ĕненмесĕр чупса пырса чӳрече каррине сиретĕп те кантăка уçса яратăп: янкăр тӳпе, хĕвел, сип-симĕс курăк – Витя çук. Чӳрече айĕнчи сак çинче шурă розăсен çыххи. Ăна хĕрлĕ хăюпа илемлетнĕ. Кам килсе панăши?

Халат уртса ятăм та урама чупса тухрăм, анчах сак çинче нимĕнле чечек çыххи те çук. Унталла-кунталла пăхкалатăп. Никам утни те курăнмасть. Пӳрте кĕретĕп. Сĕтел çинче анне çырса хăварнă хут татки: «Эпĕ ĕçе каятăп. Алăксене питĕрсе хăвар».

Чечек çыххи çухални ман кăмăла пăсмарĕ, тĕлĕкре çеç пулнă тесе шухăшларăм. Витьăна курнишĕн савăнтăм: манса кайман иккен хăйсен вожатăйне. Манăн яланах çавăн пек пулать: аякра пурăнакан çынна тĕлĕкре курсан – унран çыру илетĕп.

Апатланса тумлантăм та юрла-юрла шкула васкарăм. Çĕкленӳллĕ кăмăлпа çитрĕм, йăл-йăл кулкаласа учительсен пӳлĕмне кĕтĕм. Тӳрех вĕрентекенсем салхуллине асăрхарăм. Ман тăрăх темĕнле сивĕ хум чупса иртрĕ. Сывлăх сунтăм та ырă мара сиссе хам вырăна кĕрсе лартăм. Кăшт тăхтасан пĕр учительница, Витьăсемпе кӳршĕллĕ пурăнаканскер, сăмах хушрĕ:

– Регина Петровна, эсир илтнĕ-и, Витя Савченко вилнĕ. Икĕ кун каялла. Телеграмма килнĕ. Паян хăйне тупăкра илсе килеççĕ...

Эпĕ ним калама пĕлмесĕр ларатăп. Каллех тĕлĕк куратăп пулĕ тетĕп. Кунĕпех чирлĕ çын пек çӳрерĕм. Ним тума та, нимĕн шухăшлама та пĕлместĕп – пуç ĕçлемест.

Уроксем пĕтнĕ çĕре Савченкона илсе килни çинчен пĕлтерчĕç. Вăл летчиксен çуллахи тумĕпе пулнине тата аллипе кăкăрне бинтпа чĕркесе çыхни çинчен каларĕç. Пичĕ çинче нимĕнле суран та çук, чĕрĕ пекех выртать терĕç.

Тепĕр кунне Витьăна юлашки çула ăсатрĕç. Эпĕ унпа сыв пуллашма каймарăм. Унăн сăнарĕ тĕлĕкри пек чĕрĕ юлтăр терĕм.

Унтанпа çур ĕмĕр иртрĕ пулин те çав тĕлĕке манаймастăп, паян ир курнă пекех туйăнать: таса тӳпе, çутă хĕвел, симĕс курăк, Витя Савченко. Чĕрĕ.

Халĕччен те тĕн-тĕшмĕшпе усал-тĕселе ĕненместĕп пулин те çав тĕлĕкрен тĕлĕнме пăрахмастăп. Мĕн кăтартрĕ-ха ăна мана? Хăй вилнĕ хыççăн икĕ кунтан мĕнле майпа курма пултартăм-ха вăл мĕнле аманнине? Тата мĕн каласшăн пулчĕ-ши вăл мана юлашкинчен?

Тен, хăйĕн туйăмĕ вилĕмсĕр пулнине пĕлтерес терĕ?

■ **Роза ВОЛКОВА.**

Вăрнар районĕ,
Калинино сали

***Николай КАРЛИН***

# Вăрçă суранĕсем

**Баллада**

*«Вăрçă нушине хура халăх курать»*
**Автор**

1

### Çыракантан

Çапса çавăрттарать,
Тĕнче пĕтет пуль кĕçĕр.
Куçа уçма памасăр
Тустарать тăман.
Кун пек çанталăкра
Чипер чăваш, пĕлетĕр,
Килтен çынна çеç мар,
Йытта та кăларман.

Лаша çурт умĕнче,
Юр кĕлетки пек чĕмсĕр.
Урисене кăна
Хуллен ылмаштарать.
Çатан карта çинче
Те тилхепи, те чĕлпĕр,
Чĕлхесĕр янавар –
Тăратнă та тăрать.

Чӳречерен ӳкет
Шур каркăç витĕр çутă,
Кĕртсем çинче выляççĕ
Мĕлкисем тулта.
Елюк килне валли
Паян турттарнă вутă,
Халь çав арçынсене
Кăштах сăйламалла.

Ял-йыш сăмахĕ тĕрлĕ,
Эпĕ ăнланатăп...
Ĕçки-çики, тен, кĕрлĕ
Кĕçĕр çур çĕрччен.
Елюк аппашăн эпĕ
Пур пĕр кулянатăп,
Çуртне-йĕрне, ара,
Тытса пырать пĕччен.

Пулсаччĕ мăшăрпах,
Шкулта пĕрлех вĕренчĕç.
Вăрçи хускалнă каç
Туй ларнăччĕ клубра.
Виç эрнерен вара
Военкомат чĕнтерчĕ,
Пĕр ушкăн çамрăка
Ăсатрăмăр вăрçа.

Çич-сакăр çул хушши
Елюк пĕр вĕçĕм кĕтрĕ.
Хыпарсăр çĕтнĕ хут
Килсен те çимĕкре.
Çут шанчăк – чун ăшши –
Тумлам-тумламăн пĕтрĕ,
Сӳнсе кĕлленчĕ вут
Çап-çамрăк чĕрере...

Хĕрхентĕм лашана –
Чаппанпалан витетĕп.
Кĕрпекленен юртан
Тасатрăм çурăмне.
Çил çук çĕре, хӳтте,
Кил картине, кĕртетĕп,
Çуна çинчи утта
Хуратăп ун умне.

Чĕлхесĕр янавар,
Çапах та чĕрĕ чун вĕт.
Лаша вăл тăнлăрах
Хăш чух хăй хуçинчен...
Ку ăйăра вара
Эп ĕлĕкрен пĕлетĕп,
Юпах тихаччĕ Çăлтăр
Вăрçă тухиччен.

2

### «Çăлтăр» тиха

Вĕçĕмсĕр улăх,
Эп кĕтӳре!
Курăкĕ тулăх –
Çи те, çӳре!

Чи кĕçĕнни эп
Кĕтĕвĕпе,
Пĕр кĕçенетĕп,
Пĕр сиккипе...

Тем кĕрĕслетрĕ
Çак ирхине,
Çумăр ислетрĕ
Çĕр кăкрине...

Çук тапăрта
Вăй питти лашасем,
Çук пуçăмра
Вăй выляс шухăшсем.

Кайрĕç таçта
Паллакан кĕтӳçсем,
Юлчĕç ялта
Ваттисем, вĕттисем...

Çавăн чух пуçланчĕ ахăр самана –
Нимĕнле лаша ан куртăрччĕ ăна,
Пĕр хупаççĕ тапăра, пĕр хĕсеççĕ кăкăра.
«Çăлтăр», – теççĕ, – ан хăра,
Сӳре тăвăн акара».

Кĕçенсен те, анне хирĕç сас памасть,
Ĕшенсен те – ана вĕçĕ курăнмасть.
Чарăнатăн – саламат çурăм тăрăх çунтарать.
Хăвалать те хăвалать,
Урлă-пирлĕ уттарать.

Çавăн чух мана хĕрхенчĕ бригадир,
Урăлса курман пулсан та каç та ир.
Илсе килчĕ тăранттас, çурса кӳлчĕ пит саккас.
«Çăлтăр», – терĕ, – çи те вĕç,
Тупрăм саншăн çăмăл ĕç».

Юрласа чунне уçатчĕ бригадир,
Тимлесе ăна итлетчĕ пĕтĕм хир:

«Тапăртатса тăрать тур лаши,
Тапăртатса тăрать тур лаши,
Ай-яй-яй, рай-яй-яй!
Çăлтăр, итле, Ванюка питле!»

3

### Ванюк бригадир шухăшĕ

Миçемĕш çул Елюк тавра çӳретĕп,
Лашам та пĕлсе çитрĕ ун тĕлне.
Уявсенче пĕрле ĕçсе-çиетĕп,
Çавăраймарăм пур пĕр кăмăлне.

Ун мăшăрĕ çак вăрçăра çухалчĕ,
Вăрçи пĕтни кĕç икĕ-виçĕ çул...
Шыраттарса çырнин çук пулĕ шучĕ,
Чĕри çинчен пĕрех ӳкмерĕ чул...

Мана тиркерĕ вăрçăра пулманшăн.
Çав вăрçăран эп пытанса юлман.
Чун ыратать унта пуçа хуманшăн,
Пире ялта та çăмăлах пулман.

Шартламара камсем вăрман турттарнă
Улатăртан та Шăмăршă таран,
Тар юхтарса камсем тыр-пул пуçтарнă,
Вăйсем чаксассăн çинĕ пултăран?

Пĕрех пулман мухтавĕ те хисепĕ,
Тӳленине те ытлашши курман,
Тен, çавăнпах уй-хир ĕçченĕ эпĕ,
Ĕçкĕпелен кăшт пăрăнтăм çулран...

Эх! Çăлтăр, вăр, сăтăр!
Сиккипе! Кĕççе питпе!

«Тапăртатса тăрать тур лаши,
Тапăртатса тăрать тур лаши,
Ай-яй-яй, рай-яй-яй!
Çăлтăр, итле, Ванюка питле!»

4

### Тăлăх салтак арăмĕ Елюк

Ыйăхăм вĕçрĕ те кайрĕ,
Кĕçĕр вăл урăх килмест.
Вуннă-ши, вун пĕр-ши çапрĕ
Кивĕ сехет – илтĕнмест.

Çил ачисем ашкăнаççĕ
Тĕттĕм урай вĕçĕнче,
Çӳллĕ кĕртсем купалаççĕ
Ман чӳрече умĕнче.

Иртрĕ те кайрĕ яш ĕмĕр,
Эс аякра, вăрçăра...
Аса илсем мана кĕçĕр,
Чĕрĕ пулсассăн ютра...

Пурнăçĕ пирĕн аванччĕ,
Тин çеç пĕтернĕччĕ шкул.
Эсĕ чи çывăх юлташчĕ,
Пирĕншĕн уçăччĕ çул.

Çук çав, телейĕм çухалчĕ
Иккĕн пĕрле пуличчен,
Санăн вăрçа каймаллаччĕ,
Эп тăрса юлтăм пĕччен.

Эс таврăнма сăмах патăн,
Эпĕ – кĕтмешкĕн сана,
Кайрăн – хыпарсăр çухалтăн,
Çавă амантрĕ чуна...

Темшĕн мана тупаймаççĕ
Эп кĕтекен çырусем,
Тен, çулăмран тухаймаççĕ,
Тен, çырăнман та вĕсем...

Вăрçă хăрушă, пĕлетпĕр,.
Шанчăкăм пур пĕр хĕрӳ.
Шутсăр, пĕр вĕçĕм кĕтетпĕр
Эпĕ те, пĕчĕк хĕрӳ...

Ыйăхăм вĕçрĕ те кайрĕ,
Кĕçĕр вăл урăх килмест.
Иккĕ-ши, виççĕ-ши çапрĕ,
Вăхăчĕ кĕçĕр иртмест...

5

### Хыпарсăр çухалнă салтак сăмахĕ

Эй! Чĕррисем!
Хамăр ялсем!
Ватти-вĕтти те,
Вăй питтисем!
Пухăнăр-ха пĕрле,
Итлĕр пире пĕрре!

Эпир вилнĕ.
Вăрçăра вилнĕ.
Вăхăтсăр,
Чăн та, чăнах,
Пачах, яланлăхах.

Вăрçа та çитсе кĕреймерĕмĕр,
Вăрçма та питех пĕлеймерĕмĕр,
Анчах тăшманран шикленмерĕмĕр,
Йышпа, кăшкăрса çĕкленейрĕмĕр.

Печĕç – лектерчĕç,
Лекрĕç – тӳнтерчĕç...
Татăлчĕ терчĕ,
Вăрçă пĕтерчĕ.

Пĕрне хĕрхенчĕ,
Пĕрне вĕлерчĕ...

Эй! Чĕррисем!
Çĕр çинчисем!
Пĕр тăвансем те,
Çичĕ ютсем!

Пухăнăр-ха пĕрле,
Итлĕр пире тепре!
Пĕлĕр, пурнăç чăнах,
Çыннăн пĕрре анчах.

Камăн юлнă куççулĕ,
Йĕтĕр эппин кăштах.

Эпир вилнĕ.
Вăрçăра вилнĕ.
Вăхăтсăр,
Чăн та, чăнах,
Пачах, яланлăхах.

6

### Паянхи çыракантан

Иртет çав пурте,
Хĕл те иртсе кайрĕ.
Кур! Çуркунне килет хирпе.
Тăри юрлать миçемĕш çаврăм,
Кама валли-ши çак ирпе...

Юрлатăр – юрлама пĕлсессĕн,
Эп пĕлмесен те кăшкăрап.
Шур хурăн ытамне кĕрсессĕн
Тăри пекех шăрантарап.

Хуллен пăхкаласа илетĕп
Йĕри-тавра асăрханса,
Çуркуннене мухтасчĕ тетĕп
Чун-чĕреренех савăнса.

Çĕнтерӳпе Мăн кун уявĕ
Кăçал килет-мĕн юнашар,
Çур акисен ĕçри çуйхавĕ
Ăнса пырсассăн япăх мар.

Вилнисене те асăнатпăр
Палăксене тирпейлесе.
Кĕрекере вара ларатпăр
Сума суса, ĕçкелесе...

Пĕрех иртет сисмесĕр ĕмĕр,
Курмаллине курса юлар!
Халь манăн хайлава, туссемĕр,
Хуллен çеç малалла вулар.

Ялта çак калавран халь юлчĕ
Пĕр тăлăх арăм çеç – Елюк.
Тус бригадирĕ шăнса вилчĕ,
Начар çын марччĕ-ха Ванюк.

Хăй хуçине илсе çитернĕ
Елюк килне леш ват лаши.
Ăна мĕн тихаран ӳстернĕ
Ванюк вун пилĕк çул хушши.

Хуçи вилсессĕн Çăлтăра та
Текех тытмарĕç утарта.
Ват лашаран усси сахал та,
Кĕçех ăсатрĕç тутара.

Елюк аппа ялтах пурнать-ха,
Ытла тухсах та курăнмасть.
Тăхăр вунна хăй çывхарать-ха,
Анчах тирпейсĕр курăнмасть.

Хĕрĕ малтан Шупашкартаччĕ,
Халь ялĕнче, шкулта ĕçлет,
Ачи ун салтакра-ха – каччă,
Хĕлле курма яраççĕ тет.

7

### Елюк мăнукĕ – салтак

Çуран утатăп, юр кăчăртатать,
Хир урлă выртнă ансăр утма çул.
Ир тухнă уйăх шăннă, пытанать,
Раштав сиввийĕ кăларать куççуль.

Килелле май пĕрех утма аван,
Чунра илемлĕ кĕвĕ янăрать.
Ĕнĕрлесе пыратăп манасран,
Çырса хума сивви чăрмантарать.

Çунатланса вĕçсе каяс килет,
Эп хĕсметрен килеп ик эрнене...
Ханкалара кам пулнă – вăл пĕлет,
Çак ик эрне мĕне пĕлтернине.

Чечня вăрçин пушарĕ чарăнмасть,
Кăварĕ юлнă иртнĕ ĕмĕртен.
Амаланать вăл, вĕçĕ курăнмасть –
Сӳнтересси килмест çав пирĕнтен.

Вăрçи, çава пек, халăха çулать,
Саккунлăхпа тискерлĕх ик енче.
Этемлĕхе ыр кăмăллăх çăлать –
Çав чăнлăха çухатнă пуль тĕнче.

Тата пĕр çухрăм утмалла-ха ман,
Каç еннелле хĕл кунĕ сулăнать.
Сулахайра – çырма, умра – вăрман,
Унтан тухсассăн ялăм курăнать.

Анчах та чим, малта пĕр ĕмĕлке,
Те кунталла, те ялалла каять.
Кăсăкланса пăхатăп тимлесе –
Ку еннеллех килет пек туйăнать.

Мучи иккен, ĕшеннĕ хăй самай,
Шăлне çыртмасăр утăм тăваймасть.
Кив сăхманпа пăс тытнă мулахай
Ват шăм-шака паян ăшăтаймасть.

Сунатăп сывлăх висĕ утăмран
Çар пуçĕсем вĕрентнĕ пек пире.
Каçхи вăрман вăранчĕ ыйхăран,
Турат çинчен юр тăкăнать çĕре.

Анчах та, тем, мучиçĕм, васкаса
Эс пăрăнасшăн утма çул çинчен.
Ма куçусем пăхаççĕ хăраса
Хăв салтакра пулман пек халĕччен...

Аса илсемччĕ иртнĕ вăхăта,
Вун саккăртах фронтра çӳренине...
Çапăçусен суранĕ чунунта
Амантмаллах чикесшĕн чĕрӳне.

Сан умăнта çур ĕмĕр каялла,
Хисеплесе пуç тайнă çут тĕнче,
Анчах та пурнăç урапи çапла –
Паян эс кĕлмĕç – нимĕç умĕнче.

Кам айăплă халь сирĕн умăрта,
Тĕнче вăрçин манми паттăрĕсем,
Кама паян явап тыттармалла,
Чĕнмеççĕ чăрăшсем те хурăнсем...

Утма çултан тухатăп айккине,
Чĕркуç таран путсан та – ним те мар.
Парадри пек тăрса мучи умне
Пуça тайма, çĕр-шывăм, ирĕк пар!

8

### Çыраканран

Кăтра хумсем çыран енне васкаççĕ,
Хум хыççăн хум, хум хыççăн хăвалать.
Тăпра çинче пĕр йĕр те хăвармаççĕ,
Куç умĕнчех ман йĕр те çухалать.

Кунсем, çулсем çын ӳкĕтне кĕмеççĕ,
Çул хыççăн çул, пĕр кун пек, çухалать.
Çак тĕнчене нумайлăха килмеççĕ,
Эппин телейлĕ пурăнас пулать.

Телей кӳрет атте-анне пехилĕ,
Чăн юрату, чăваш юрри-ташши,
Ăнса çын пулнă ачасен кун-çулĕ,
Тăван кил-çуртăн тăнăçлă ăшши.

Телейлĕ пулăр! Пĕр-пĕрне юратăр,
Ыр кăмăллăх ан пĕттĕр çынсенче!
Вăрçа пула нихçан та юн ан юхтăр,
Куççуль ан юхтăр çакă çĕр çинче!

